# «ЕДИНАЯ РОССИЯ» партин программăллă чĕнĕвĕ

Раççейĕн хисеплĕ гражданĕсем!

Нумаях пулмасть кăна, пĕр вунă çул каялла, пирĕн çĕр-шыв питех те йывăр лару-тăрураччĕ, çав кризис сиенне калăпăшĕпе граждан вăрçи кӳнĕ хĕн-хурпа танлаштарма пулать.

Эпир пĕрле питĕ пысăк йывăрлăхсене сиртĕмĕр, çĕклентĕмĕр. Эпир – çĕр-шывăмăрăн миллион-миллион гражданинĕ, аслă патшалăхăн аслă халăхĕ! Пĕрле çине тăрса эпир хамăрăн юратнă Тăван çĕр-шывăмăра – пирĕн Раççее – упраса хăвартăмăр, çĕнĕрен çĕклерĕмĕр.

Анлă кризис пирĕншĕн йывăр тĕрĕслев пулчĕ. Çапах унчченхи аркатуллă йывăрлăхсене, чухăнлăха каялла таврăнма, кризиса сывлăх сыхлавĕнчи, вĕрентӳри, социаллă сферăри çитĕнӳсене тĕп тума памарăмăр. Халăхăн пысăкрах йышĕн интересĕсене хӳтĕлесе хăвартăмăр.

Экономикăна çĕнĕрен хăвăрт уралантарни – пирĕн пĕрлехи çĕнтерӳ. Рабочисем, инженерсем, ял ĕçченĕсем, предпринимательсем – хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă, ыррине шанма пăрахман мĕн пур çын вăй хунипе, вĕсен таланчĕ пулăшнипе çапла тума пултартăмăр.

Йывăр тапхăра йĕркеллĕ ирттертĕмĕр, çапах лăпланма юрамасть, лару-тăрăва, хамăрăн майсене чăнлăха тĕпе хурса хакламалла.

Пирĕн çĕр-шывăн мĕнле пулмалла мар – çакна пурте пĕрешкел ăнланатпăр. Унăн хавшак, чухăн пулмалла мар, вăл пайланса ан кайтăр, технологи енĕпе юлса пынипе, чиновниксем, коррупци, терроризм иртĕхнипе ан нушалантăр, ютшăнса ытти çĕр-шывран ан уйрăлтăр.

Эпир экономика чĕр тавар конъюнктурине пăхăннипе, социаллă тан марлăхăн хăрушă шайĕпе, çынсен патшалăх учрежденийĕсенчен, судсенчен, право хуралĕн органĕсенчен пулăшу ыйтнă май тĕрĕс марлăх туйăмĕ пулнипе, бизнесра, патшалăх службинче тата общество ĕç-хĕлĕнче пуçарулăх тĕлĕшпе чăрмавсем нумаййипе çырлахма пултараймастпăр.

Пирĕн çивĕч çак ыйтусене сирсе ямалла. Раççей малалла ăнтăлас енĕпе пĕрре кăна мар тĕслĕх кăтартнă, çакă вăл аслă çĕр-шыв пулнине, унăн халăхĕн чăн хăвачĕпе талантне, пирĕн культура, Раççейĕн пĕрлехи тата пайланми нацине, пĕрлехи тата пайланми Раççее çирĕплетекен хаклăхсен пуянлăхне  кăтартать.

Çĕнĕ тата чăннипех пысăк тĕллевсене пурнăçлама Раççейĕн пĕтĕмпех пур.

Пирĕн инновацисене тĕпе хуракан экономика йĕркелемелле, демократи институчĕсене тата çĕнĕ право патшалăхне çирĕплетмелле. Тупăш кăна мар, Раççейри çемьесен пурнăç пахалăхĕпе ырлăхĕ çĕкленмелле – çакă пирĕн пĕтĕм ĕçĕн тĕп пĕлтерĕшĕ.

Пирĕншĕн тĕп вырăнта – çын!

Пирĕн стратеги никĕсĕсем

Пĕрремĕшĕ. Граждансен тата мĕн пур шайри бюджетсен тупăшĕсене пысăклатас тĕллевпе экономикăна, вĕрентӳ тытăмне çĕнетесси, промышленноçа çĕнĕ техникăпа тивĕçтересси, инвестици климатне лайăхлатасси, инновацисем валли инфратытăм йĕркелесси, ĕç тухăçлăхне ӳстересси, ĕç хăрушсăрлăхне çирĕплетесси.

Иккĕмĕшĕ. Социаллă обязательствăсене пурнăçласси, ĕç укçине, пенсисене, пособисене ӳстересси, чухăнлăхпа кĕрешесси, сывлăх сыхлавне çĕнетесси.

Виççĕмĕшĕ. Коррупцие кăкласси, чиновниксен тупăшĕпе, патшалăх валли таварсем сутăн илессипе, министерствăсемпе ведомствăсен йышăнăвĕсемпе çыхăннă кăтартусене уçă тăвасси, влаçăн çынсен пурлăх прависене, граждансен ирĕкĕсен сферине тӳрремĕнех пырса тивекен  пуçарăвĕсене общество енчен экспертиза тăвасси.

Тăваттăмĕшĕ. Суд тытăмне никама пăхăнманлăх, уççăнлăх тата тĕрĕслĕх принципĕсем çинче çирĕплетесси, уголовлă саккунсен «экономика статйисем» текен пайĕсене гуманизацилесси, ирĕксĕрлесе, вăйпа усă курса тăвакан, чи малтанах ачасене хирĕç тăвакан преступленисемшĕн, çавăн пекех террор акчĕсемшĕн яваплăха çирĕплетесси.

Пиллĕкмĕшĕ. Нацисен тата конфессисен хушшинчи тăнăçлăха упрасси, саккунсăр миграципе, этноссемпе çыхăннă преступленисемпе, ксенофобипе сепаратизм палăрăмĕсемпе кĕрешесси, Раççейри халăхсен культурисене, йăлана кĕнĕ мĕн пур конфессие  ирĕклĕ аталанма пулăшасси.

Улттăмĕшĕ. Çĕнĕ йышши политика тытăмне аталантарасси. Вăл пурне те, çав шутра чи пĕчĕк социаллă ушкăнсене те хăйсен шухăшне пĕлтерме тата патшалăхпа общество управленийĕн процесĕсене хутшăнма, пирĕн çĕр-шывра правăсăр тата хӳтлĕхсĕр çынсем çуккине туйса ĕненме май парĕ. Ирĕклĕх тата тĕрĕслĕх кашни çыншăн пулччăр.

«ЕДИНАЯ РОССИЯ» пулăшнипе халăх представителĕсене çул парассин пахалăхне лайăхлатмалли чылай пуçарăва пурнăça кĕртнĕ. Пирĕн парти политика конкуренцийĕ тата партири шалти демократи аталанăвĕ валли кирлĕ условисене малашне те лайăхлатса пырас тĕллевлĕ. Пирĕн позици – граждансен обществи енчен бюрократие çирĕп тĕрĕслесе тăрасси, влаçа çĕнетмешкĕн пуçаруллă тата тӳрĕ кăмăллă çынсене çул парасси.

Çиччĕмĕшĕ. Шалти тата тулашри хăрушсăрлăх, ăнăçлă ĕçлекен полици, хăватлă Хĕç-пăшаллă Вăйсем, çарти тата флотри, право хуралĕн тытăмĕсенчи служба ят-сумне çĕклесси.

Саккăрмĕшĕ. Çĕр-шыв хăй тĕллĕн тата виçеллĕ тытса пыракан тулашри политика. Унăн тĕллевĕ пĕртен пĕрре – çынсен ырлăхне ӳстересси тата вĕсен хăрушсăрлăхне çирĕплетесси. Пирĕн интеграци проекчĕсем аталану, граждансем тата бизнес валли çĕнĕ майсем йĕркелеме тивĕç. Раççейпе Белоруссин тата Казахстанăн таможня союзĕ ĕçлет. Çитес 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен Пĕрлехи экономика анлăшĕ йĕркеленет, ку – интеграцин тата та çирĕпрех шайĕ. Унтан вара тата малалла – Еврази союзне туса хурасси патне – утăпăр.

Сĕннĕ стратеги пирĕн ĕçĕн пайăр çул-йĕрĕсене палăртать.

Пирĕн çĕнĕ экономика

Пирĕн вăйлă пулмалла, çитес пилĕк çул хушшинче тĕнчери чи  пысăк экономикăсен шутне кĕмелле.

Çитес çирĕм çул валли пирĕн нацин пĕрлехи тĕллевĕ çапларах: промышленноçра тата бюджет секторĕнче 25 миллионран кая мар çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелемелле е тĕпрен çĕнетмелле.

Транспорт, энергетика тата çыхăну инфратытăмне малтанах аталантарса бизнеса тĕрев парăпăр. Çул-йĕр строительствин калăпăшĕпе хăвăртлăхне ӳстерсе пырăпăр. Çакă Раççейĕн мĕн пур гражданинĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çĕр-шывăмăрăн никĕс шайĕнчи наукине, çĕнĕ йышши тĕпчевсене укçа хывăпăр.

Ĕçлĕ пуçарулăх çулĕ çинчи чăрмавсене сирĕпĕр. Бизнес интересĕсене пырса тивекен мĕн пур саккун проектне предпринимательсен пĕрлĕхĕпе пĕрле сӳтсе явăпăр.

Хамăрăн çĕнĕ йышши продукципе тĕнче рынокĕсене тухакан компанисене пулăшăпăр.

Çитес пилĕк çул хушшинче мĕн пур йышши апат-çимĕç тĕлĕшпе çĕр-шыв никама пăхăнманлăхне туллин тивĕçтерĕпĕр.

АПКра çĕнĕ производствăсем, ĕç вырăнĕсем йĕркеленин, фермерсене, пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшнин, социаллă инфратытăма аталантарнин тĕллевĕ пĕрре – Раççей ялĕн илĕртӳллĕ, унти пурнăç çынсемшĕн, çамрăксемшĕн хăтлă пулмалла.

Раççей – социаллă патшалăх

Обществăри ĕç-пуç йĕркеллĕ пулнин, патшалăх ăнăçлăхĕн тĕп  кăтартăвĕ – демографи.  Нумаях пулмасть кăна-ха халăх йышĕ чакса пынине пула çĕр-шыв çуллен миллионшар çынна çухатса пыратчĕ. Эпир çине тăнипе демократи кризисĕ каялла чакрĕ. 2008 çултанпа Раççейре 6 млн ытла çын çуралнă. Çакă – юлашки çирĕм çул хушшинчи чи пысăк кăтарту.  2006 çултанпа пурнăçăн вăтам тăршшĕ тăсăлчĕ – виçĕ çул ытла хушăнчĕ.

2013 çултах пурнăçăн вăтам тăршшĕ 70 çул урлă каçмалла. Пирĕн демографири ырă туртăмсене çирĕплетмелле, Раççейри халăх йышĕ пĕчĕккĕн ӳссе пырассине тивĕçтермелле.

Пирĕн вăтам класăн чăннипех пысăк йышне йĕркелемелле. Вĕсем, чи малтанах, пĕтĕм çĕр-шыва малалла туртакан çынсем –  тавар туса кăларакан, пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекен предпринимательсем, пултаруллă врачсем, учительсем, аслă шкул преподавателĕсем, рабочисем тата инженерсем, наукăпа культура ĕçченĕсем, ял ĕçченĕсем. Тĕрĕссипе, пĕтĕмпех вĕсем çинче тытăнса тăрать. Вĕсем – пуласлăха туптакансем.

Раççейре ĕçлекен кашни çын лайăх ĕç укçи илмелле.

2014 çул вĕçленнĕ тĕле çĕр-шыври вăтам ĕç укçи 1,5 хут пысăкланмалла. Çав вăхăтрах бюджет отраслĕсенче вăй хуракан ăста та пултаруллă специалистсем пайăр регионти экономикăри вăтам шайран кая мар ĕç укçи илмелле.

Икĕ çул хушшинче сывлăх сыхлавĕнчи ĕç укçин фончĕ 30 процент пысăкланать. Çитес çулах çĕр-шывăн мĕн пур регионĕнче шкулсенчи учительсен тата Раççейри мĕн пур аслă шкул преподавателĕсен шалăвĕсем экономикăри вăтам ĕç укçипе танлашĕç е унран пысăкрах пулĕç.

Ĕç укçине пысăклатни, уйрăмах социаллă сферăри шалăва ӳстерни профессионализма, ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлассине хавхалантарĕç – вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, социаллă ытти отрасль граждансем кĕтнине, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерччĕр.

Пурнăç пахалăхĕ – вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, пурăнмалли çурт-йĕр

Пирĕн çĕнĕ шкул. Эпир учительсен ăсталăхне ӳстерме укçа уйăрăпăр, сахал йышлă шкулсен, уйрăмах ялсенчи шкулсен çивĕч ыйтăвне татса парас енĕпе ĕçлĕпĕр, вĕренӳ заведенийĕсенче хевтесĕр çынсем те усă курмалли хăтлă лару-тăру йĕркелĕпĕр, шкулсене çамрăксем ĕçлеме килмелли условисем тăвăпăр.

Пилĕк çул хушшинче пирĕн Раççейре 1 пинрен кая мар çĕнĕ шкул тумалла, çак пилĕк çул хушшинчех çĕр-шывра юхăннă пĕр шкул та юлмалла мар.

Шкулти спорта – уйрăм тимлĕх. 2014 çул тĕлне – Олимп вăййисем ирттернĕ чух – мĕн пур шкул спортзалне çĕнĕ йышши инвентарьпе тивĕçтерĕпĕр.

Ача сачĕсем – черетсĕр. Çывăх çулсенчех ача сачĕсенче вырăн çитменнипе çыхăннă çивĕч ыйтăва сирмелле. Ачасем йĕркеллĕ условисенче ӳсчĕр, Раççейри çемьесем патшалăхран курăмлă чăн пулăшу илччĕр, хĕрарăм ача çуратнă хыççăн ĕçе таврăнма, хăйĕн квалификацине тавăрма пултартăр – çак тĕллевпе пĕтĕмпех тумалла. Шкулченхи учрежденисен ĕçченĕсен шалăвне ӳстерессине – уйрăм тимлĕх.

Пахалăхлă сывлăх сыхлавĕ. Çĕр-шывăн сывлăх сыхлавĕнчи чăн улшăнусене Раççей гражданĕсем хăйсем туйччăр. Вĕсен паха медпулăшупа усă курмалли правине туллин тӳрре кăлармалла.

Тĕп вырăнта – медицина промышленноçне тата фарминдустрие чĕртесси. Пирĕн чикĕ леш енчи пысăк корпорацисен пăхăнăвĕнчен тухмалла, чи кирли – хамăрăн çынсене пысăк мар хаксемпе, паха эмелсемпе тивĕçтермелле.

Ялти медицинăна уйрăмах пулăшу кирлĕ. Яла ĕçлеме каякан врачсене тĕпленмешкĕн 1 млн тенкĕ таран уйăрса парăпăр.

Вăтам медицина персоналĕ валли çакнашкал программăсене Раççейĕн мĕн пур регионĕнче пурнăçламалла.

Туянма май пур пурăнмалли çурт-йĕр – Раççейри кашни çемьене. 2016 çул тĕлне пурăнмалли çурт-йĕр строительствин калăпăшне икĕ хут пысăклатмалла. Инфляцие чакарнă май çывăх вăхăтрах ипотека кредичĕсен процент виçисене малалла чакарасшăн.

Эпир çамрăк учительсем валли пĕчĕк процентлă тата малтан хывмалли пĕчĕк  виçеллĕ ятарлă ипотека йĕркелĕпĕр.

Пулас Патшалăх Думи тата Правительство федераци харпăрлăхĕнчи ирĕклĕ çĕрсене мĕн пур бюджетник – врачсем, учительсем, аслă шкулсен преподавателĕсем, культура тата социаллă сфера ĕçченĕсем – валли кооператив мелĕпе пурăнмалли çурт-йĕр тума парас ыйтăва татса пани вырăнлă тесе шухăшлатпăр. Федераци субъекчĕсен çак программăна хутшăнмалла.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене пурне те малтан палăртнă пекех пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерĕпĕр.

Тĕрĕслĕх – чи кирли

Пирĕн мĕн пур йышăнăвăн Раççей гражданĕсен тĕп йышĕн интересĕсене тивĕçтермелле. Эппин, вĕсен тĕрĕслĕхе тĕпе хумалла. Çут çанталăк пуянлăхĕн рентипе кăна пурăнакан, чĕр тавар кăна сутакан бизнес валли – пĕр налуксем; теприсем – пĕчĕкрех налуксем – çĕнĕ ĕç уçакансем, инновацисемпе тата производствăпа ĕçлекенсем, çĕнĕ предприятисем тăвакансем, кирлĕ таварсем туса кăларакансем валли.

Тупăшран илекен налукăн пĕрешкел 13 процентлă шкалине çирĕплетрĕмĕр – çак политикăран пăрăнасшăн мар.

Çав вăхăтрах пуянсем çине лекекен налук тиевĕ вăтам класа, граждансен тĕп йышне пырса тивекеннинчен пысăкрах пулмалла. Чи малтанах –

ырлăхсемпе усă курнинчен, куçми пурлăхран, пурлăхран илекен налуксен шучĕпе.

Граждансен 2009 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен пулнă налук парăмĕсене судсăр-мĕнсĕрех, ансатлатнă йĕркепе пăрахăçлама сĕнетпĕр. Влаçсен айăпĕпе тĕрлĕ ыйту çуралать тĕк – йăнăшсене тӳрлетмелле.

Раççей бизнесĕн социаллă яваплăха тĕпе хумалла. Çĕр-шывăмăрпа – Раççейпе – пĕр хăвăртлăхпа, пĕрешкел тĕллевсемпе пурăнмалла. Вĕрентĕве, кадрсем хатĕрлессине, социаллă çĕнĕ проектсене, Раççей культурине çине тăрсах инвестици хывмалла. Граждансен обществине ыр кăмăллăх программисене аталантарма пулăшмалла.

Пирĕншĕн тĕп вырăнта – коммуналлă пулăшу ĕçĕсен уçăмлă та тĕрĕс хакĕсем. Эпир коммуналлă ресурссемпе усă курмалли социаллă нормăна çирĕплетĕпĕр, çав шайра «коммуналка» хакĕсем инфляцирен ытла ӳсмĕç.

Пирĕн управляющи тата коммуналлă компанисем «çынсен кĕсйине кĕнипе», ăшăпа çутăшăн тата шывшăн ытла та пысăк тӳлев ыйтнипе çырлахма юрамасть. Кунта питĕ çирĕп тĕрĕслев кирлĕ.

Çĕр-шыв хăрушсăрлăхĕ – çын хăрушсăрлăхĕ

Тĕп тĕллев – граждансен хăрушсăрлăхĕн шанчăклă гарантийĕсене туса хурасси. Полици тата суд тытăмĕн ĕçĕнче пахалăх тĕлĕшпе улшăнусем кирлĕ.

Çитес 5-10 çул хушшинче хамăрăн çарпа флота çĕнĕ хĕç-пăшалпа туллин тивĕçтермелле, оборонăпа промышленноç комплексне çĕнетмелле. Патшалăхăн оборона саккасĕ çулталăклăх мар, тӳрех 3 çуллăх пулĕ. Çакă предприятисен экономикине палăрмаллах лайăхлатĕ.

Çар служащийĕсен, право хуралĕн органĕсен ĕçченĕсен хăйсен тата çемйисем валли социаллă гарантисен тулли пуххи, хăйсен яваплăхĕн шайне кура тивĕçлĕ ĕç укçи пулмалла. Унăн виçи экономикăн тĕп отраслĕсенчи ăста специалистсемпе управленецсем илекен шалу шайĕнче, çар службин йывăрлăхне кура унран пысăкрах та пулмалла.

2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен Хĕç-пăшаллă Вăйсен тата шалти çарсен çар служащийĕсен, çавăн пекех шалти ĕçсен органĕсен ĕçченĕсен укçи пысăкланать, 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ытти вăй ведомствисен йышне çĕнĕлле тӳлеме пуçлаççĕ.

Хăш ведомствăра пулнине пăхмасăр мĕн пур çар пенсионерĕн пенсийĕсем 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнченех вăтамран 1,5 хут пысăкланаççĕ.

Çитес икĕ çул хушшинче Хĕç-пăшаллă Вăйсенче тата ШЁМĕн шалти çарĕсенче черетре тăракансем пурте пурăнмалли яланхи çурт-йĕр илĕç. Ытти вăй ведомстви тĕлĕшпе те çак ыйтăва татса парас енĕпе ĕçлĕпĕр. Малашне çар служащийĕсем планпа пăхнă йĕркепе, нумай çул кĕтмесĕр хватер илме пултарĕç.

Федерализма тата вырăнти хăй тытăмлăха аталантарасси

Лайăх пурăнмалли, карьера тумалли, ĕçлесе илмелли, ачасене лайăх пуласлăхпа тивĕçтермелли майсем тĕп тата пысăк хуласенче кăна мар, çĕр-шывăн пĕтĕм территорийĕнче, кирек хăш хулара, поселокра, кашни ялта пулмалла.

Эпир Раççей регионĕсене тата муниципалитетсене ытларах полномочи, финанс ресурсĕсем парăпăр, анчах вырăнсенчи влаç яваплăхĕ те пысăкрах пулĕ. Регионсен хăйсен налук тупăшĕсене малалла ӳстерессипе çыхăннă интересне вăйлатăпăр. Çакăнпа пĕрлех Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен шайĕнче муниципалитетсене пулăшмалли инструментсем йĕркелемелле.

Общество тытăмĕсен, бизнесăн регионсен тата муниципалитетсен пурнăçне хутшăнассипе çыхăннă хăй тĕллĕнлĕхне, ирĕкне, социаллă активлăхне тата яваплăхне пур енĕпе те пулăшасшăн.

Пирĕн вăй – халăх шаннинче

Раштавăн 4-мĕшĕнче – Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ. Çитес çулхи çуркунне – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн суйлавĕ. Вĕсем – Раççейре политика тăнăçлăхне çирĕплетмелли условисене йĕркелемелли питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ тапхăрсем. Çав тăнăçлăхсăр экономикăна та калкал аталантараймăпăр, хамăрăн граждансен пурнăç шайне те çĕклеймĕпĕр.

«ЕДИНАЯ РОССИЯ» пĕтĕм нацин политика лидерĕ пулма, уйрăм ушкăнсен ансăр интересĕсен шайĕнчен çĕкленсе хăй хыççăн ертсе кайма пултарнине ĕнентерсе пачĕ ĕнтĕ. Вăл хăйĕн майлисене кăна мар, оппоненчĕсене те илтет. Стратеги шайĕнчи тĕллевсене тĕпе хурса, мĕн пур регион, социаллă мĕн пур ушкăн, çĕр-шывăн мĕн пур гражданинĕн интересĕсемшĕн ĕçленине ĕнентерчĕ. Чăннипех пĕтĕм халăх тата пĕтĕм Раççей партийĕ пулнине кăтартрĕ.

Эпир Патшалăх Думин суйлавне Раççей обществин мĕн пур сийĕн представителĕпе пĕрле хутшăнатпăр – çĕр-шыв аталанăвĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене татса пама пĕтĕм нацие пĕр чăмăра пухмалла.

Пĕтĕм Раççейĕн Халăх фрончĕ кĕске вăхăтрах обществăн анлă коалицийĕ пулса тăчĕ, партие кĕменнисене, ытти парти представителĕсене, пултаруллă, çĕр-шыв нушисене çывăха илекен нумай çынна патшалăх шайĕнчи йышăнусене хатĕрлессине витĕм кӳмешкĕн май пачĕ.

Эпир хамăрăн программăна халăх пуçарăвĕсен никĕсĕ çинче йĕркеленĕ. Хамăрăн суйлавçăсен сĕнĕвĕсен никĕсĕ çинче. Çитес пилĕк çул хушшинче халăхăн çак наказĕ çине таянса ĕçлĕпĕр. Общество палăртакан тĕллевсене пурнăçлăпăр, хамăрăн çынсене пăшăрхантаракан ыйтусене татса парăпăр. Кашни çын кирлине, кашниех хăйĕн пултарулăхĕпе усă курассине, кашни хăйĕн тата ачисен ырă пуласлăхне шанассине тӳрре кăларăпăр.

х х х

«ЕДИНАЯ РОССИЯ» – Президент майлă парти. Пирĕн суйлав списокĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе çĕр-шыв Президенчĕ малта. Çĕр-шыв гражданĕсене Патшалăх Думин суйлавĕнче «ЕДИНАЯ РОССИЯ» майлă пулма, унăн Дмитрий Анатольевич Медведев ертсе пыракан кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнсе калатпăр.

Çĕнелнĕ Правительствăна шăпах çĕнтерӳçĕ-парти йĕркелĕ. Пĕтĕм халăх шанăçĕ çине таянса Дмитрий Анатольевич Медведев çĕнĕ, ăнăçлă ĕçлекен, çамрăк, пултаруллă ертӳçĕсен командине йĕркелеме пултарасси, пурнăçăмăрăн мĕн пур енне çĕнетес тĕллевпе Раççей Федерацийĕн Правительствин тилхепине тытасси пирки иккĕленместпĕр.

Эпир çĕр-шыв Президентне суйлас тĕлĕшпе хамăр позицие палăртрăмăр. Ку çĕр-шыв аталанăвĕшĕн, влаç ăнăçлăхĕшĕн, пирĕн ĕç-хĕл стратегине пурнăçлассишĕн тĕп ыйту тесе шухăшлатпăр.

«ЕДИНАЯ РОССИЯ» Раççей Президенчĕн должноçне йышăнма хамăрăн Лидера, парти Председательне Владимир Владимирович Путина тăратать. Федерацин Раççей Федерацийĕн Президенчĕн суйлавĕ çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕн çак йышăнăва çирĕплетĕпĕр.

Эпир эсир пирĕн парти тата пирĕн лидерсем майлă пуласса шанатпăр. Хамăр çĕнтерессе çирĕп шанатпăр.

х х х

Çĕр-шыв пуласлăхĕ пирки эпир пĕрешкел шухăшлатпăр, пирĕн – пĕрлехи плансем, хамăр патшалăх умĕнче тăракан тĕп ыйтусем тĕлĕшпе те – пĕрлехи хуравсем. Эпир хамăр ума лартакан тĕллевсем – пирĕн çынсен тĕп йышне хумхантаракан тĕллевсем. Эпир чи пысăк тĕп тĕллев тĕлĕшпе пĕр шухăшлă – эпир хамăр çĕр-шыва телей сунатпăр тата ăна юрататпăр.

Хамăрăн Раççее эпир памастпăрах. Ăна аркатас текенсене памастпăр, пушă тата пурнăçланми шантарусемпе çынсене улталакансене памастпăр.

Раççей ирĕклĕ, тӳрĕ кăмăллă тата яваплă çынсен аллинче пулмалла. Çапла пулĕ те.

Пуласлăх – пирĕнте!

Пĕрле çĕнтеретпĕрех!